ПУÇАРУ

# Пушкăрт чăвашĕсене чыс та мухтав

**Республика кунĕ хыççăн тунтикун чăваш литературине юратакансемшĕн питĕ кăсăк пулăм пулса иртрĕ: пĕтĕм чăваш юратса вулакан «Ĕмĕр сакки сарлака» романăн авторĕн – Никифор Мраньккан – вилтăпри çине палăк вырнаçтарчĕç. Ăна уçнă ятпа йĕркеленĕ савăнăçлă (е хурлăхлă темелле-ши – пухăннисем ниепле те татса калаймарĕç) лару-тăрăва писателĕн тăванĕсем, чăваш çыравçисемпе журналисчĕсем, Куславкка районĕнчи чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕсем, вулавăшсенче ĕçлекенсем тата Пушкăртстанран килнĕ хăнасем хутшăнчĕç.**



*Вячеслав Ерохин тата Микул Ишимбай*

Хура чул мăнаçлăн ларать. Чул çине Мраньккан чи паллă сăнне ӳкерттернĕ, писателĕн пичет машинкипе ĕçлесе ларнă самантра сăнарланă портретне пурте курнă ĕнтĕ. Эпир чылайăшĕ çак сăнӳкерчĕкĕ тăрăх пĕлетпĕр те «Ĕмĕр сакки сарлака» авторне. Хитре, килĕшӳллĕ, мăнаçлă, кунта чăвашсен чи паллă романне çыракана пытарнă тесе кăтартма та намăс мар халь. Халь çапла, анчах...

Пĕлтĕр вара урăхларах ӳкерчĕк пулнă кунта. Пушкăртстанран Чăваш Республикин чи пысăк уявне паллă тума килнĕ йăхташăмăрсем Куславккана килсе тухман пулсан, тен, кăçал та, малашне те ĕлĕкхиллех пулĕччĕ тĕр... **Вячеслав Ерохин** (Ярухха Витти) тата унăн юлташĕсем ун чухне ятарласа Мраньккан вилтăпри çине çитсе килме шутланă, хăйсем темиçе хутчен те юратса вуланă романа çыракана хисеплесе чĕрĕ чечексем хурас ĕмĕтпе çуннă. Чи малтанах вилтăприне чылай шыранă-ха вĕсем, Мраньккан тăван ялне – Пилешкассине – те çитсе килнĕ, унта тăванĕсене тĕлпулса вара Куславккари масарта канлĕх тупнă Никифор Федорович патне çитнĕ.

– Чăвашсемшĕн «Ĕмĕр сакки сарлака» роман вăл Михаил Шолоховăн «Тихий Дон» е Лев Толстойăн «Война и мир» хайлавĕсемпе тан. «Ниушлĕ çак кĕнекене çыраканăн вилтăпри çавнашкал юхăнса лармалла вара?» – шутласа илтĕмĕр эпир, – аса илет Вячеслав Михайлович. – Киле çитсенех Пушкăртстанри чăваш çыравçисен «Шуратăл» литература пĕрлешĕвĕн ертӳçипе Микул Ишимбайпа çыхăнтăм. Тĕпĕ-йĕрĕпе каласа патăм чун ыратăвне.

– Вара эпир ниме мелĕпе укçа пухма шутларăмăр, – калаçăва малалла тăсать **Микул Ишимбай**. – Пушкăртстанри чăвашсен «Урал сасси» хаçатĕнче пĕлтерӳ пичетлерĕмĕр, кам миçе тенкĕ панине пĕлтерсех тăтăмăр. Çапла вара укçине пухса çитерсен Çтерлĕ хулинче палăкне тутартăмăр. Кăçал хамăрпа пĕрле илсе килсе лартса хутăмăр.

Ăнлантăр-и, вулаканăмăрсем? Пушкăртстанри чăвашсем хăйсем укçа пухса, хăйсем тутарса, хăйсемех килсе лартса хунă. (Сăмах май, Чăваш Енри культура ĕçченĕсенчен те



*Пушкăртстан чăвашĕсен парни*

пулăшу ыйтнă вĕсем, анчах кунта ал тăсса паракана тупайман...). Тĕрĕсне каларĕç сăмах илнисем: «Ĕмĕр сакки сарлака» кĕнеке çук кил-çурт чăвашсем пурăнакан хутлăхра сайра-тăр, пулсан та ун пеккисем – çамрăксен пӳрчĕсем çеç пулĕ. Вара ниушлĕ Мраньккa ячĕпе çĕршер тенкĕ памĕччĕç-ши «Ĕмĕр сакки сарлака» романа паян та юратсах вулакансем?

Пушкăртстанри хастарсене писателĕн тăван ывăлĕ Альберт Никифорович Мораньков пуç тайсах тав турĕ. «Никифор Мраньккa çуралнăранпа 100 çул çитнине паллă тунă чухне Чăваш Республикин унчченхи пуçлăхĕсем «Ĕмĕр сакки сарлака» авторне питĕ чаплă палăк лартмалла, унăн музейне уçмалла тесе те шантарнăччĕ те, шел, сăмахне тытаймарĕç», – терĕ вăл. Пушкăртстанри чăвашсем, ав, никама та нимĕн те шантарман, ытлашши шавласа та çӳремен, «Эпир! Эпир!» тесе кăкăр çапман – тытнă та туса хунă. Маттурсем, мĕн калăн урăх.

✎ **Владислав ДМИТРИЕВ,**
**автор сăнӳкерчĕкĕсем**

ÇИВĔЧ ЫЙТУ

# Тата камăн вилтăпри асар-писер?

**Никифор Мраньккан вилтăпри çине Пушкăртстанри чăвашсем пĕрлехи вăйпа палăк лартни çуратрĕ çак шухăша: тен, тата та пур пирĕн çапла юхăнса кайнă вилтăприсем? Паллă çыравçăсен, ӳнерçĕсен, артистсен, спортсменсен – хăйсен ăсталăхĕпе те пултарулăхĕпе Чăваш Çĕрĕн ятне-шывне, чапне-сумне çĕкленĕ ентешĕмĕрсен вилтăприсем?**

Вулакансенчен пулăшу ыйтас килет: тен, хăшĕсене тăван ялĕсенчех пытарнă та халь вĕсем çинчен манса кайнă, тен, вĕсен ачи-пăчи пулман та – вилтăприне пăхса тăракан та çук – çакнашкал тĕслĕхсем çинчен пирĕн редакцине çырса пĕлтерме ыйтатпăр.

Паллах, ыйтнипе çеç хускалас çук-ха вулакан. Çавăнпа та енчен çапларах сĕнес килет:

◈ редакцие килнĕ чи тĕплĕ çырусен авторĕсене парнесемпе хавхалантарăпăр,

◈ кашни çырăвах хаçатра пичетлеме тăрăшăпăр, хаçатра май килмесен сайтра вырăн тупăнатех,

◈ енчен те пĕр-пĕр яла çитсе килмелле пулсан, пирĕн корреспондент çула тухма хирĕç пулас çук, лару-тăрăва вырăна çитсе тишкерĕ.

Уйрăммăнах вăрçăра вилнĕ поэтсемпе çыравçăсем çинчен калас килет: кам хăш ял патĕнче, хăш масарта выртнине пĕлетпĕр-и-ха? Вĕсен тăванĕсем (енчен те вĕсем пур пулсан, пурăнаççĕ пулсан) шыраса тупайнă-и вăрçă паттăрĕсем канлĕх тупнă тĕлĕсене?

Мĕн чухлĕ çын тĕлсĕр-йĕрсĕр выртать пулĕ... Чăваш культуришĕн питĕ пĕлтерĕшлĕ те курăмлă ĕçсем тунă – чăваш драматургине тата профессиллĕ музыкине пуçарса яракансенчен пĕри **Федор Павлович Павлов** хăш вырăнта выртнине никам та пĕлмест-çке... Ун пеккисем тата мĕн чухлĕн – никам та калаймасть. Шута та илмен, аслă ăрурисем кайнăçемĕн вĕсене никам аса илекен те пулмасть.

Хамăрăн мухтавлă ентешĕмĕрсене манманни, вĕсене хисеп туни вăл – пĕтĕм халăхăмăрăн ятне-сумне çĕклени. Эпир чăннипех те мухтава тивĕç çыннăмăрсемпе мăнаçланма вĕренсе çитеймерĕмĕр-ха, тем чарать пире çакна тума: те ытлашши сăпайлăх, те ăмсану туйăмĕ, те тата урăххи?

Пайăр тĕслĕх çинче чарăнса тăрам.

Йошкар-Ола хулинче пирĕн чи мухтавлă ентешĕмĕрсенчен пĕрин – «Нарспи» пекех вилĕмсĕр «Арçури» поэмăн авторĕн **Михаил Федорович Федоровăн** – вилтăпри пур. Унта çакнашкал плита вырнаçтарнă (сăнӳкерчĕкре). Виçĕ чĕлхепе çырнă: «Кунта чăваш тата мари халăхĕсен çутлăхçине, чăваш литературин классикне М.Ф. Федорова (1848 – 1904) пытарнă».

Гранит чулне малтанах çапла вырттарса вырнаçтарнă-ши ĕнтĕ, кайран çеç ӳксе мелленнĕ-ши вăл, калама пултараймастăп, анчах çапла выртаканскере пырса такăнса ӳкмесĕр те кураймастăн. Пĕлсе тăракан çын çеç шыраса тупма пултарать ăна. Вăл вара, ман шутпа, таçтанах курăнмалла.

Михаил Федоров чăваш литературишĕн питĕ сăваплă ят. Шел, унăн пултарулăхне паянхи кунччен те тивĕçлипе хак паман эпир. Тăван халăхăмăра, пирĕнпе пĕрлех тата çармăс халăхне те, çутта кăларас тесе мĕн чухлĕ тăрăшнă вăл тата! Вилтăприсем çине



вырнаçтаракан мрамор е гранит стеллă çеç мар, кӳлепине касса кăларнă палăках (е бюст пултăр-и **Çеçпĕл Мишшинни** евĕр) тивĕç тесе шутлатăп «Арçури» авторĕ.

Тивĕçлипех тивĕçлĕ вăл. Унсăр пуçне çак палăк Йошкар-Олара пурăнакансене, çак хулан илемне курса канма пыракансене мухтавлă чăваш ывăлĕ çармăс халăхне мĕнле пулăшни çинчен аса илтерсе тăни те пăсмасть – чăвашсем мĕн тери ăслă та пысăк чĕреллĕ пулнине пурте пĕлсе тăччăр.

Каллех тĕп ыйту патне таврăнатăп:

1. Хăвăр тăрăхран тухнă паллă çыннăн вилтăпри çинчен çырнине «Республика» хаçатăн электронла почтин адресĕпе (respublika-21@yandex.ru) ямалла.

2. Çырăва чăвашла та, вырăсла та çырма юрать.

3. Çырăва кирек мĕнле жанрпа та шăрçалама юрать: хуть аса илӳ евĕр, хуть ахаль хыпар пек, хуть эссе евĕр, хуть сăнӳкерчĕксемпе çирĕплетсе презентаци майлă та...

4. Ярса памалли вăхăт – çурла уйăхĕн 10-мĕшĕччен.

Сирĕн çырăвăрсене, сĕнĕвĕрсене кĕтетпĕр. Тен, Мраньккa евĕр манăçнă писатель-поэтăн вилтăприне пĕрлехи вăйпа йĕркене кĕртме май килĕ.

✎ **Дмитрий МИТИН**

ШУХĂШЛАР-ХА, ТĂВАНСЕМ

# Ялти, тутли, усăлли

**Кама юр-вар кирлĕ: сĕт, хăйма, чăкăт, услам çу? Лавккари мар, ялти çимĕç: чăн-чăн сĕт, шап-шур юр пек мар, сарăрах хăйма, мĕншĕн тесен унта çăвĕ чăн-чăнниех, услам çу тата ытти юр-вар. Е тата çăмарта кама кирлĕ? Сарри чăн-чăн сарă тĕсли, шурринчен пĕлтерĕшĕпе кăна мар, тĕсĕпе те уйрăлса тăраканни. Тен, хăшĕсем тата ялта çитĕннĕ сысна ашне кăмăллаççĕ, хулари пасарта сутакан тутăсăр какай йăлăхтарман-и сире?**

Анне парса янă чăх какайĕнчен шӳрпе пĕçеретĕн те... хваттер тăрăх тутлă шăршă сарăлать, яшкана та сарă тĕс çапать – çисе тăранмалла мар. Лавккара туяннă чăхран шӳрпе пĕçерсен вара яшка витĕр Шăнкăртам курăнать. Ытти çимĕçсем те çаплах, эсир ăна эп каламасăрах пĕлетĕр.

Халь чылайăшĕ ялти çимĕçсене туянма тăрăшать. Хула çывăхĕнчи çынсем Шупашкарта пурăнакансем хушшинче тăтăш илсе тăракансене тупса (тăванĕсем, тăванĕсен пĕлĕшĕсем, кӳршисем, юлташĕсем) куллен турттарса килсе параççĕ. Хваттере çитиччен тенĕ пек. Çак мел икĕ енĕшĕн те аван: ялтисем ытлашши çимĕçне вырнаçтараççĕ, хуларисем тутлă та усăллă апат çиеççĕ.

Ку хула çывăхĕнче пурăнакансене майлă тейĕпĕр. Тата хăйсен çăмăл машина пуррисене. Шупашкартан тата ытти хуласенчен аяккарах тĕпленнисен вара мĕн тумалла хăйсем çисе ярассинчен ытларах пулакан, çитĕнекен çимĕçпе?

Чăваш тăрăхĕнчи купсасем XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче халăхран пухнă çăмартана Европăна ăсатнă, Бельги, Голланди, Франци патшалăхĕсем таранччен çитернĕ. Халĕ вара – паянхи технологисене тĕпе хурса, машинисем сехетре 200 çухрăм ытларах хăвăртлăхпа çӳреме пултарнине шута илсе – çăмарта пухаймастпăр-и?

Ним пытармалли те çук, паян чылайăшĕ сĕт пама пăрахрĕ. Мĕншĕн тесен хакĕ çук. Пама шел. Ĕнисене сутакансем те чылайланчĕç. Нумайăшĕ сĕтрен тĕрлĕ юр-вар тума пуçларĕ: чăкăт, тăпăрч, услам çу. Малтан та туман мар-ха ăна ял çынни, анчах халь ытларах та тăвать. Çав чăкăтне, тăпăрчне, услам çăвне вăл сутма та пултарĕччĕ, анчах ăçта, кама, мĕнле майпа?

Халĕ тата акă улма-çырла, пахчаçимĕçсем каяççĕ. Каллех кирлинчен самай ытларах çитĕнеççĕ вĕсем: çырли те, кишĕрĕ-суханĕ те, кавăнĕпе çĕрулмийĕ те. Ниушлĕ ытлашшине патшалăха памалли шывне-майне йĕркелеме çук, э? Паллах, уйрăм çынсем (ытларах чухне кăнтăр енчи халăх ывăлĕсем) пухса çӳрекелеççĕ-ха, анчах вĕсем питĕ-питĕ йӳнĕпе туянасшăн пулнипе каллех пама шел. Пасарта сутакан хакпа çимĕçне пилĕкне ава-ава çитĕнтерекене сĕнекен укçа хушшинчи уйрăмлăх питĕ пысăккипе шел.

Ниушлĕ çакна патшалăх шайĕнче йĕркелеме çук-ши? Çак пайталлă ĕçе уйрăм усламçăсене памасăр. Ял халăхĕшĕн те усăллă пулĕччĕ, патшалăх хыснине те укçа кĕрĕччĕ. Газпа нефть сутнă чухнехи пек миллиардшар-миллиардшар ан пултăр, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пулсан та пухăнĕ.

Укçинчен те ытларах çак меслет ялта пурăнакансене пулăшу кӳнипе пĕлтерĕшлĕ. Ял çынни килте ĕçлесех укçа-тенкĕ ĕçлесе илме пултарĕччĕ, Мускава та Çурçĕре çӳремесĕр, килте çемьипе пĕрле пурăнсах.

Каллех Шупашкар çывăхĕнче пурăнакансен тĕслĕхĕ патне таврăнар-ха. Ял çынни хăйĕн машинипе илсе килет юр-варне, çитерсе парать, çакăншăн вышкайсăр пысăк укçа илмест вăл, пасар хакнех. Шăпах хакĕ тивĕçтерет те хулара пурăнакансене. Хак, акă мĕн тĕпре пулмалла. Ял халăхне те тивĕçтертĕр вăл, туянакана та. Хальхи пек – халăхран 10 тенкĕпе пухаççĕ те лавккара 60 тенкĕпе ярăнтараççĕ – ан пултăр.

Шел пулин те, хальлĕхе ыттисен çав укçапах лавккаран, енчен те ялти çимĕç пулмасан, шывпа хутăштарнă сĕт, темле çу ярса çăратнă хăйма, тăпăрч туянма тивет...

Тен, кам та пулсан урăхларах шутлать? Тен, çак шухăша пурнăçа кĕртмелли мел сĕнекен тупăнать вулакансем хушшинче? Тархасшăн, çырса пĕлтерсемĕр, ырă шухăшсене хаçатра та пичетлĕпĕр, депутатсен хăлхине те кĕртĕпĕр.

✎ **Кам та пулсан çак ыйтăва пурнăçа кĕртессе кĕтсе**
**Владислав НИКОЛАЕВ**